

Галина МАТВЕЕВА




# Хутлă-хутлă кермен

**Сăвăлла халап**

*Н.И.Ашмарин умĕнче
пуçăма тайса*

Н.И.АШМАРИН ҪУРАЛНĂРАНПА
150 ҪУЛ ҪИТНĔ МАЙ

Ĕлĕк-авалах та мар,
Ĕнерпе паян та мар,
Пĕр асамçă пулнă тет,
Тĕлĕнтермĕш тунă тет.

Акара та сухара,
Улăхра та улахра,
Выртмара та вырмара,
Кăмпара та çырлара,
Ĕçкĕре, пумилккере,
Вăйăра, туй-шилĕкре,
Арманта та вăрманта...
Çын ăçта – вăл çавăнта
Çӳресе ырми-канми
Пĕтĕм чăваша валли
Хаклă пурлăх пухнă тет,
Хут кермен хăпартнă тет.
Хутлă-хутлă çав кермен
Кивелмен, шăтман, çĕрмен.
Ăна çумăр витеймен,
Сивĕ çил те сӳтеймен,
Çăткăн çулăм çиеймен,
Çивĕч хĕç те илеймен.
Халĕ те ларать кермен,
Кĕрсе курăр – кам кĕмен.

Ан шыра унта çăтмах,
Ун пуянлăхĕ – сăмах.
Кашниннех хăвачĕ пур,
Ĕмĕрхи тымарĕ пур.
Тарăнрах пулсан тымар,
Саншăн тăвăл – ним те мар.
Пĕтĕмпех чăтан-тӳсен,
Малаллах утан, ӳсен.

Ăслă та ĕçчен хуçа
Çĕр каçа та кун каçа
Пухнă иксĕлми тупра
Упранать вун çич томра.

Кермене кĕрсен туян:
Вăл пасар пекех пуян.
Мĕн шырать арçын алли –
Пурте хатĕр ун валли:
Акапуç, сӳре, тĕрен,
Ут тавраш̆ĕ – тĕрлĕрен.
Тыр катки, сăра пички –
Пысăкки те пĕчĕкки,
Пăчкă, пуртă, мăлатук,
Кĕреçе, савук, луттук,
Лăпă, карçинкка, пурак...
Мĕн ыйтсассăн та – пурах

Кил патши пур – кăмака.
Пыр пурин те-çке яка.
Çын мĕскер çиет-ĕçет –
Йăлт кăмакара пиçет.
Ан ӳркен, вара пулать
Хăпарту, хуплу, кулач,
Вĕтĕ кукăль те салма,
Йăвача та капăртма.
Выльăх пуснă тăк ирпе –
Каç енне пулать шӳрпе,
Çи тултармăш та шăрттан.
Чăх пуссан – йĕтес туртан.
Хур кукли, çырла кукли...
Куклисем – вуншар тĕрли.
Тĕрлĕрен яшки-пăтти,

Нимĕрĕ, ытти-хытти.
Пасарта çук япала –
Тутлă пĕçерес йăла –
Упранать кĕнекере,
Курăнать кĕрекере.
Чăваш арăмĕ вăр-вар,
Кунĕпе те пушă мар:
Вăл арлать, тĕртет, çĕлет,
Пурнăçа тытма пĕлет.
Кĕрсе пăхăр: керменте
Ун валли пур темĕн те.
Пин ĕç хатĕрĕ ăстан,
Ĕлкĕрсе пырать ăçтан?..

Курăнать хитре арча,
Куç илме те çук, ача.
Мĕн тултарнă-ши шала? –
Уçмалла та пăхмалла.
Ку, иккен-ха, хĕр арчи,
Ал ăсти пуль хĕрачи:
Арчари тухья, тевет
Пикене ят-сум кӳрет.
Туй пĕркенчĕкĕ, кĕпе –
Иккĕшне те тĕрĕпе
Капăрлатнă çав тери,
Йăлкăшса тăрать тĕрри.
Темĕн чухлĕ чĕрçитти,
Ал шăлли, сĕтел витти,
Пуç тутри, саппун, сурпан...
Капăр-çке эреш пуртан.

Йăнтари те ука çип,
Вĕт шăрçа та хурткуççи,
Шерепе, хăю, çӳçе
Илсе хунă пĕр çӳпçе.
Çĕлеме те тĕрлеме,
Пукане пек çӳреме
Чăваш хĕрĕн тем те пур,
Ма тесессĕн хăй маттур.

Сăмахпа пуян кермен,
Алăкне те питĕрмен.
Ун хуçи ăш пиллĕрен
Хăнисем те тĕрлĕрен:
Çĕр çынни сухаçă-и,
Сутуçă-лавккаçă-и,
Пулăç-и, сунарçă-и,
Атăçă, чăптаçă-и,
Пыл ăсти утарçă-и,
Мул хуçи-и, тарçă-и –
Ун пурах кашнин валли
Пиллесе каламалли.

Вăл калать пек чăваша –
Ырă чунлă йăваша:
«Пур сан çирĕп вăй-хăват,
Ун çумне эс хуш тахат.
Пурăнас тесен телейлĕ
Таланна упра тирпейлĕ.
Пур пулсассăн та нухрат,
Тальăрна та ан çухат.
Тĕпсĕре тĕмен çитмен,
Тирпейли ниçта пĕтмен.
Эп пуçтарнă пурлăха
Илĕр, – тет вăл халăха. –
Нумайрах мĕн чуль илетĕр –
Çавăн чуль пуять кĕлетĕм».

Вăл калать пек: «Çак тупра
Пĕтĕм халăха упрать».
Йăпатать пек чухăна:
«Мĕскĕнле ан тыт хăвна,
Пурнăçу пит юрлăран
Ан писсем эс юрăран.
Чĕлхӳнти çĕр-пин сăмах –
Çĕр-пин юрăшăн чухах.
Ыр сунса сана калап:
Сăвă-юрă та халап –
Халăхри ăс-тăн палли –
Юлтăр ачусем валли.
Пурăнсан та тулăхпа
Выляс марччĕ сăмахпа,
Ма тесессĕн çиçĕмрен
Хăвăртрах сăмах-çĕмрен.
Юрăхсăр элек сăмах
Çавартан тухсассăнах
Çаврăнать тĕнче тавра,
Ма тесен тĕнчи çавра.
Пĕлмелле сăмахăнне
Вăхăтне те вырăнне.
Сăмахпа çынна ан йĕрт,
Ыр ятна ахаль ан çĕрт».

Çав ыр кăмăллă пуян –
Питĕ паллă çын паян.
Пуçтарса пин-пин сăмах
Тивĕçнĕ вăл çак сума.
Çакă пурлăх мĕн тума? –
Пĕр-пĕриншĕн кар тăма.
Çитĕ пуль сăмах çапма,
Халапа вĕçлем çапла:

Микулай мучи – Ашмарин –
Пирĕншĕн тăрмашнă мар-и?
Хутлă-хутлă керменне,
Ăнланса хакне-мĕнне
Чăвашсем валли хăварнă,
Упрамашкăн халаллантă.
Словарьти кашни сăмах –
Ылтăн-кĕмĕл те ахах.
Пулмасан çак пурлăх манăç –
Пурăнмашкăн пур-ха шанăç!